26 мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1946
ИЮНЬ
20
ЮНКУН
118 (1869) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Выльăх апачĕ хатĕрлес тата 1945—1946 çулхи хĕл валли выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен

Çак кунсенче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ выльăх апачĕ хатĕрлес тата 1945—1946 çулхи хĕл валли выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен сӳтсе-явса, решени йышăнчĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртса хăварчĕç: кăçал выльăх-чĕрлĕх апачĕн çирĕп базине туни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тата унăн продуктивлăхне малалла ӳстерес тĕлĕшпе татăклă вырăн йышăнса тăрать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртрĕç: утă пухса кĕртесси тата выльăх-чĕрлĕх валли силос хывасси, тырпулсене пухса кĕртес ĕç пекех, чи пысăк кампанисенчен пĕри пулса тăрать. Совнаркомпа Обком бюровĕ колхозсемпе совхозсем, çĕрĕç органĕсем тата райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем умне çакăн пек задача лартрĕç: утă пухса кĕртес, силос хывас тата выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене хĕл валли хатĕрлес ĕçе тырпулсем пухса кĕртес ĕç пуçланиччен, кăçалхи июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле; çавна май çакăн пек ĕçсем туса ирттермелле:

I. УТĂ ПУХСА КĔРТЕС ЕНĔПЕ

1. Утă çулмалли машинăсене, лобогрейкăсене, çавасемпе кĕреплесене, сенĕксене тата утă пухса кĕртмелли ытти инвентаре юсаса хатĕрлес ĕçе халех организацилемелле.

2. Утă пухса кĕртес тĕлĕшпе ĕçлеме бригадăсемпе звеносем тумалла. Вĕсене малтанах уйрăм участоксем уйăрса памалла тата, утă çулса купалас тĕлĕшпе кашни кун мĕн чухлĕ ĕçлемеллине кăтартса, заданисем памалла.

Кашни колхозрах ĕçлеме пултаракан мĕнпур колхозниксене утă пухса кĕртес ĕçе явăçтармалла, çум çумлакан тата çĕртме пуссисенче ĕçлекен колхозниксене кăна хăйсен ĕçĕнчех хăвармалла.

Колхозсен правленийĕсене çапла тума сĕнес: утă çулнă çĕрте кунĕпех ĕçлеме пултарайман колхозниксене колхоз валли утă çулма уйрăм участоксем уйăрса памалла.

Кăçалхи июнĕн 25-мĕшĕччен кашни колхозрах утă çулмалли ĕç плансем туса хатĕрлемелле, вăл плана утта капана хывас ĕçе те кĕртмелле.

3. Утă пухса кĕртнĕ çĕрте уйрăм сдельщинăпа ĕçлемелле тăвас пулать тата колхозниксене, правительство постановленийĕсенче кăтартса панă тăрăх, ĕçшĕн хушса тӳлемелле. Утă çулнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене, ĕçкунĕсем çырса панисĕр пуçне, çулса купаланă уттăн вуннăмĕш пайне валеçсе памалла, лашапа ĕçлемелли сенокосилкăсемпе утă çулакансене тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен 40 гектартан ирттерсе çулнă кашни гектаршăн 20-шер килограмм утă парса, ĕçшĕн хушса тӳлемелле.

Утă пухнă çĕрте ĕçленĕшĕн колхозниксене вĕсем çулнă утта купара йышăннă хыççăн, мĕн чухлĕ çулнине висçе е турттарса пăхса бригадир йышăннă хыççăн тин утă валеççе памалла. Çулса илнĕ утта бригадăри е звенори колхозниксем хушшинче вĕсен утă пухса кĕртнĕ çĕрте тунă ĕçкунĕсен хисепне шута илсе валеçмелле.

Утă пухса кĕртнĕшĕн колхозниксене утă парас ĕçе утă пухса пĕтернĕ хыççăн, анчах кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса ирттермелле.

Пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕх валли утă çитмен колхозсене çакăн пек тума сĕнес: утă пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçленĕ колхозниксене утă вырăнне ытти йышши выльăх апачĕ е продуктсем памалла.

Утă пухса кĕртнĕ вăхăтра унта ĕçлекен колхозниксем валли пĕрлешсе апатланас ĕçе организацилемелле.

4. Пăрçа йышши курăксемпе тĕрлĕ курăксене вĕсем чечеке ларнă вăхăтра, пĕрчĕллĕ курăксене вĕсем пучаха ларнă вăхăтра массăллăн çулма тытăнмалла.

Колхозсенче лайăх пахалăхлă, витаминлă утă хатĕрлес шутпа, пуринчен малтан клеверпа люцерна уттине, пĕрчĕллĕ курăксем пучаха ларичченех тата пăрçа йышши курăксем чечеке ларичченех çулмалла.

Шыв илекен улăхсенче пур çĕрте те курăксене иккĕмĕш хут çулса илес ĕçе организацилемелле.

5. Сыхласа усранă чухне утта çаратса пĕтерни тата пăсса яни пулмалла мар тăвас шутпа, колхоз правленийĕсемпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: утта пĕтĕмпех типĕтсе çитернĕ хыççăн тин капана хывмалла, çулса пухнă пĕтĕм утта колхоз правленийĕсен çиеленчех висçе е турттарса йышăнмалла. йышăннă чух унăн хисепне, пахалăхне тата мĕнле купаланине кăтартса акт çырмалла та прихода кĕртсе хумалла.

Утта фермăсен заведующийне паричченех сыхласа усрас тĕлĕшпе пĕтĕмпех колхоз председателĕ ответлă пулса тăрать. Пысăк колхозсен правленийĕсене фуражирсем уйăрса хума сĕнес.

6. Райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене тата колхозсен председателĕсене государствăна утă вăхăтра памалла тума хушас, Заготсено пункчĕсене утта улăхсенчен тӳррех турттарма тытăнма хушас. Государствăна утă августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр парса татмалла.

II. СИЛОС ХЫВАС ЕНĔПЕ

1. Мĕнпур выльăхсене тăрантарас ĕçре силос, питех те лайăх сĕтеклĕ апат пулса, пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, совет, парти, çĕрĕç органĕсем умне, комсомол организацийĕсемпе колхозсем, çавăн пекех тата ялхуçалăх специалисчĕсем умне çакăн пек задача лартас: кăçал кашни ĕне пуçнех 5—6 тоннăран кая мар, кашни пăру пуçне пĕр тоннăран кая мар, кашни сысна ами пуçне 2 тоннăран кая мар тата кашни лаша пуçне çур тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла.

2. Пур колхозсенче те силос шăтăкĕсене, траншейисене тата силос хывмалли ытти сооруженисене хатĕрлесе хумалла.

Июнĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр соломорезкăсене, силосорезкăсене тата силос хывмалли ытти инвентарьсене юсаса йĕркене кĕртмелле.

3. Силос хывнă çĕрте ĕçлеме колхозсенче çак ĕçре иртнĕ çулсенче ĕçленĕ опытлă колхозниксене уйăрмалла.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе районсенчи çĕрĕç пайĕсене кăçалхи июнĕн 25-мĕшĕччен пур районсенче те силос хывас енĕпе ĕçлекенсен кĕске срокла семинарĕсене ирттерме хушас.

Колхозсенче силос хывас ĕçе фермăсен заведующийĕсем ертсе пынипе туса ирттермелле, вĕсене пулăшма уйхир бригадисенчен çителĕклĕ чухлех колхозниксем уйăрса памалла.

4. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене июнĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр колхозсене силос хывас тĕлĕшпе график палăртса пама хушас.

Силос хывмалли плана тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле тăвас шутпа, иртерех силос хывнă çĕрте акмасăр ӳсекен курăксемпе йышлăн усă курмалла. Малашне вара силос хывнă чухне ятарласа акнă курăксемпе, тымар-çимĕçсемпе, çĕрулми çеçкипе, пахчаçимĕç çулçисемпе тата ытти курăксемпе те усă курмалла.

5. Силоса сыхласа усрас тата шута илес ĕçре йĕрке тăвас шутпа, районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе колхоз председателĕсепе комиссисем тума хушас, вăл комиссисенче колхоз председателĕ, зоотехник, ферма заведующийĕ пулмалла. Çав комиссисен силос хывнă сооруженисене йышăнмалла, вĕсен пысăкăшне висçе палăртмалла тата хывнă силоса йышăнмалла. Çак комиссисен силос хывнине тĕрĕслесе йышăнса акт çырнă хыççăн силос сооруженийĕ патĕнче ятарласа юпасем лартмалла, вăл юпасем çине хăçан тата мĕн чухлĕ силос хывнине çырса хумалла.

6. Силос хывнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене хавхалантарас шутпа, вĕсене ĕçкунĕ çырса панисĕр пуçне, силос хывнă çĕрте ĕçлесе илнĕ кашни ĕçкунĕшĕн, силос шăтăкĕсемпе траншейисене тата башнисене тултарса çитернĕ хыççăн 10 килограмм çити утă памалла.

III. ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ВАЛЛИ АКНĂ КУЛЬТУРĂСЕНЕ ПĂХСА ÇИТĔНТЕРЕССИ ТАТА ТĔРЛĔ АПАТСЕМ ХАТĔРЛЕССИ ÇИНЧЕН

1. Выльăх апачĕ валли акнă культурăсене пысăк тухăçлăхпа туса илес тесе, вĕсене тĕплĕн пăхса çитĕнтерес, вăхăтра çумлас, ретсем хушшине кăпкаласа, купалас тата вĕсене удобренисемпе апат парас ĕçе организацилемелле. Колхозсен правленийĕсене çапла тума сĕнес: тымар-çимĕçсем тата ытти выльăх апачĕсем акнă пусуçаврăнăшĕсене тата ферма çумĕнчи участоксене уйрăм колхозниксене çирĕплетсе памалла. Вĕсене çав культурăсене пухса кĕртиччен пăхса çитĕнтерме хушмалла.

2. Иртнĕ çулхи лайăх опыта шута илсе, райисполкомсене, райçĕрĕç пайĕсене тата колхозсен председателĕсене çапла тума хушас: хĕллехи вăхăтра кайăк-кĕшĕксемпе сыснасене çитерме вĕлтĕрен, сурăхсене çитерме армути, çамрăк выльăхсене çитерме çулçăллă апатсем тата выльăх-чĕрлĕх валли ытти тĕрлĕ апат хатĕрлес ĕçе халех организацилемелле, вăл апатсене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1945 çулхи апрелĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнă чухлĕ хатĕрлемелле.

3. Колхоз правленийĕсемпе районсенчи çĕрĕç пайĕсене иртнĕ çултан юлнă утта пухса илсе капана хывма, çавăн пекех тата кивĕ улăма çĕмеле хума хушас. Вĕсене, шултăра апат вырăнне хурса, 1945—1946 çулхи хĕл валли сыхласа усрамалла.

4. Тымарçимĕçсемпе çĕрулмине сыхласа усрама выльăх-чĕрлĕх фермисем çывăхĕнче июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр çĕнĕ хранилищĕсем туса лартмалла тата киввисене юсаса çитермелле.

IV. ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ÇУРТЙĔРĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕС ЕНĔПЕ

1. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене тата колхоз председателĕсене çапла тума хушас: СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртсе, кашни колхозпа совхозрах обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ çуртйĕрсем — витесем, выльăх картисем, свинарниксем, овчарниксем, кайăк-кĕшĕк витисем тата ытти çуртйĕрсем хатĕрлес тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла; çав çуртйĕрсем выльăх-чĕрлĕхсен йышне малалла ӳстерсе пыма тата вĕсен тухăçлăхне хăпартма юрăхлă пулмалла.

2. Çывăх кунсенчех кашни колхозпа совхозрах выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем çителĕклипе çителĕклĕ маррине тĕрĕслесе тухмалла, мĕнле çĕнĕ витесем тумаллине тата хăш витесене юсамаллине палăртмалла, строительство бригадисенче ĕçлеме кирлĕ чухлĕ колхозниксем уйăрса хумалла, çапла вара выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене çĕнĕрен тăвас, юсас тата ăшă тытмалла тăвас ĕçсене пĕтĕмпех кăтартса панă срокра—тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен—вĕçлемелле.

3. Колхозсемпе районсен руководителĕсене çакăн çине çаврăнса пăхма хушас: выльăх картисенче çамрăк выльăхсем валли уйрăм çуртсем, пăрулламалли пӳлĕмсем тата чирлĕ выльăхсене усрамалли изоляторсем обязательнăй йĕркепе хатĕрлемелле. Выльăх витисен стенисене, урайĕсене, маччисене, чӳречисене, алăкĕсене юсаса ăшă тытакан тумалла тата выльăх-чĕрлĕх çурчĕсенче кормушкăсем, яслисем тата стойлăсем туса лартмалла, çавăн пекех тата выльăхсене шăвармалли çăлсем тата куритесем тумалла. Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсенче пуринче те, уйрăмăнах сысна витисенче, выльăх апатне пĕçерсе çитерме кухньăсем пулмалла.

4. Сахал вăрманлă вырăнсенчи колхозсене выльăх-чĕрлĕх витисене улăмпа тăм хутăштарса çăрса тăвас ĕçе анлăн сарса пыма сĕнес. Çакăнпа пĕрлех правительство районсене уйăрса панă вăрмансенчен йывăç касса хатĕрлес тата турттарас ĕçе çывăх вăхăтрах организацилемелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госплана тата райисполкомсене колхозсем обществăллă çуртйĕр тума панă йывăçпа тĕрĕс тата вăхăтра усă курнине тĕрĕслесе тăма хушас.

ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене тата ВЛКСМ Обкомне çак постановление колхозсенче, партипе комсомол организацийĕсенче пуринче те сӳтсе-явассине организацилеме хушас. Выльăх-чĕрлĕхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн тата выльăхсене хĕл каçарма çуртйĕрсене вăхăтра юсаса хатĕрлессишĕн кĕрешес майпа колхозсем, выльăх-чĕрлĕх фермисем, бригадăсем тата колхозсенчи комсомол организацийĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла.

Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле

Калинино МТС-ĕнчи чылай трактористсемпе трактористкăсем Чăваш республики 25 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Çак тĕлĕшпе вĕсем, çуракин малтанхи кунĕсенчех социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пысăк обязательствăсем илчĕç. Тракторсене типтерлĕн пăхса упраса, ĕç планне ытлашшипех тултарма, горючипе сĕрмелли çусене перекетлĕ тыткалама пулчĕç.

Çураки вăхăтĕнче социализмлă ăмăртура А. Трофимов юлташ ертсе пыракан 10-мĕш бригада мала тухрĕ. Вăл бригада 296 гектар сухаласа, çураки планне 170 процент тултарчĕ. 439 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Бригадăри уйрăм трактористкăсем Стаканова Агафия çураки планне 206 процент, Раиса Викторова 180 процент тултарчĕç.

Иккĕмĕш бригадăри трактористка Мария Микушкина çураки планне 207 процент тултарчĕ, 88 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Çураки вăхăтĕнче Д. Вазанов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада, Иванов юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригада, Л. Алексеев юлташ ертсе пыракан 7-мĕш бригада лайăх ĕçлерĕç.

Бригадăсемпе уйрăм трактористсем хушшинче социализмлă ăмăрту мĕнле курнăçланса пынине МТС-ри пуçламĕш парт-организаци куллен тĕрĕслесе пырать. Парторг А. Степанова юлташ. тăтăшах бригадăсенче пулса, коммунистсемпе е уйрăм трактористсемпе калаçать. Ĕçри йывăрлăхсене вăхăтра сирме пулăшать.

Халĕ МТС тракторсемпе çĕртме тума тытăнчĕ. А. Стаканова, Р. Викторова, А. Илларионова, М. Микушкина, В. Флотская тата ытти трактористкăсем Чăваш республики 25 çул тултарнине çĕртме планне 2—3 хут ирттерсе сухаланипе тата горючие чылаях перекетлесе хăварнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Польшăра, Литвара тата Белоруссипе Украинăн хĕвеланăç районĕсенче Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн организаторĕсемпе руководителĕсене тата участникĕсене суд туни

Айăпласа çырни

1. Леопольд Блажевич **Окулицкие**, 3. Адам Валентьевич **Бене**,
2. Ян-Станислав Иосифович **Янковские**, 4. Станислав Игнатьевич **Ясюковича**—

вĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче, Белоруссипе Украинăн хĕвеланăç районĕсенче Литвара тата Польшăра поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн организаторĕсемпе руководителĕсем пулнăшăн тата поляксен Лондонри эмиграцири правительстви кăтартса панă тăрăх Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзне хирĕç сăтăрла ĕçсем тăвассине ертсе пынăшăн, Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе боецĕсене хирĕç террорла ĕçсем тунăшăн, диверсисем тунăшăн тата вăрттăн ĕçлекен хĕçпăшаллă отрядсем тапăннине организациленĕшĕн, Совет Союзĕпе Хĕрлĕ Çара хирĕç пропаганда туса пынăшăн, айăпланакан **Окулицкие** кунсăр пуçне тата Хĕрлĕ Çар тылĕнче разведкăпа шпионла ĕçсем туса пынăшăн;

5. Антон Юзефович **Пайдака**,
6. Казимир Войцехович **Пужака**,
7. Александр Казимирович **Звежинские**,
8. Казимир Станиславович **Багинские**,
9. Станислав Францович **Мерзвана**,
10. Збигнев Францевич **Стыпулковские**,
11. Евгений Станиславович **Чарновские**,
12. Иосиф Антонович **Хацинские**,
13. Франц Андреевич **Урбанские**,
14. Станислав Францович **Михайловские**,
15. Казимир Самуилович **Кобылянские** тата
16. Иосиф Генрихович **Стемлер-Домбские**—

вĕсем Польшăра Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕсен сăтăрла ĕçĕсене хутшăннăшăн, вăрттăн ĕçленĕ ушкăнăн руководителĕсем радио станцисене, типографисене, хĕçпăшалпа боеприпассене тавăрса пама совет çар командованийĕ хушнине пурнăçа кĕртмесĕр вĕсемпе усал ĕçсемшĕн усă курнăшăн айăпласа çырни.

ХĔРЛĔ ÇАР ТЫЛĔНЧЕ ВĂРТТĂН ĔÇЛЕКЕН «КРАЙОВĂЙ ÇАРĂН» ХĔÇПĂШАЛЛĂ ОТРЯЧĔСЕНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕНИ

Нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче Польшăра, Литвара тата Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче Польшăн эмиграцири «правительстви» «Крайовăй çар» («АК») текен вăрттăн ĕçлекен çар организацийĕ туса хунă. 1944 çулхи сентябрь уйăхĕччен ăна Польша çарĕн генералĕ **«БУР»-Комаровский** ертсе пынă. **«БУР»-Комаровский** нимĕçсене тыткăна панă хыççăн, 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа, ăна **«БУР»-Комаровскин** заместителĕ бригада генералĕ **Окулицкий** ертсе пынă.

Айăпланакан **Окулицкипе** пĕрле çав вăрттăн ĕçлекен «АК» организацие ертсе пырас тĕлĕшпе Ян-Станислав Иосифович **Янковский** ĕçленĕ. Хăйне хăй вăл Польшăн вăрттăн ĕçлекен «министрсен совечĕн» председателĕ тесе чĕннĕ. Вĕсемпе пĕрле Адам Валентьевич **Бень** тата Станислав Игнатьевич **Ясюкович** «министрсем» пулнă.

Çакăнпа пĕрлех Польша территорийĕнче «рада едности народовой» текен организаци ĕçленĕ. Вăл организацие ППС-ăн генеральнăй секретарĕ **Казимир** Войцехович **Пужак** ертсе пынă.

Айăпланакан **Окулицкипе** вăрттăн ĕçлекен «правительство» аллинче хĕçпăшаллă отрядсем, хĕçпăшалпа боеприпас склачĕсем, радио саракан тата радио йышăнакан станцисем, вăрттăн ĕçлекен типографисем, вăрттăн хваттерсем пулнă.

Польшăн эмиграцири «правительстви» кăтартса панипе, хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене тата организацийĕсене малалла та вăрттăн ĕçлеме хăварса, вĕсем Совет Союзне хирĕç ĕçлеме пуçланă, совет çарĕсен тылĕнче сăтăрла ĕçсем активлăн тума пуçланă. Çакă вăл Хĕрлĕ Çарăн çулйĕрĕсенче диверсиллĕ ĕçсем тунинче тата совет офицерĕсемпе боецĕсене вĕлернинче, Польша халăхĕ хушшинче СССР-а хирĕçле пропаганда тунинче палăрнă.

Вăрттăн ĕçлекен организацин ĕçĕсене лайăхрах пытарас тесе, 1944 çулхи декабрь уйăхĕнче поляксен эмиграцири «правительстви» хушнипе, айăпланакан **Окулицкий** вăрттăн ĕçлекен «министрсен совечĕн» членĕсемпе тата «Рада едности народовой» членĕсемпе пĕрле «Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен приказ кăларнă. Çакăнпа пĕрлех «Крайовăй çарăн» округри коменданчĕсене çакăн пек вăрттăн кăтартусем панă: «Крайовăй çарăн» салтакĕсемпе офицерĕсен тĕп пайне вăрттăн ĕçлесе пыма хăвармалла. округĕнче пытанса ĕçлекен штабсем тумалла, хĕçпăшалпа боеприпассене пытарса усрамалла, ĕçлекен радиопередачиксене вăрттăнлатмалла, тенĕ.

(ĕç листисем—42, 58—60; 1-мĕш том).

Айăпланакан **Окулицкий** çапла кăтартса панă: 1944 çулхи декабрь уйăхĕнче **Копаньский** генерал ăна радиопа поляксен Лондонри «правительствин» решенине пĕлтернĕ. Вăл решени тăрăх, Хĕрлĕ Çар Польша территорине пырса кĕнĕ хыççăн, «Крайовăй çарăн» вăрттăн ĕçлекен организацийĕсемпе усă курса, вăрçăпа политикăллă ĕçсем тăвакан тĕплĕн пытарнă аппарат туса хумалла пулнă.

Айăпланакан **Окулицкий** малалла çапла кăтартса панă:

«Крайовăй çарăн» вăрттăн ĕçлекен штабĕсене Польшăра хăварасси çинчен **Копаньский** генерал панă приказа ăна «Крайовăй çарăн» руководствипе командирĕсен составне, çавăн пекех Польшăн Вăхăтлăх правительствипе Хĕрлĕ Çара хирĕç кĕрешме хĕçпăшалпа боеприпассем тата укçа-тенкĕ хăварас шутпа панă...»

(ĕç листи — 42; 1-мĕш том).

Хĕрлĕ Çар тылĕнче вăрттăн ĕçлекен штабсем тăвасси çинчен **Окулицкий** айăпланакан кăтартса панине **Я. И. Янковский, А. В. Бень, С. И. Ясюкович** тата **А. Ю. Пайдак** айăпланакансем çирĕплетсе панă.

Айăпланакан **А. В. Бень** çапла каласа панă:

«...1944 çулхи декабрь уйăхĕнче министрсен совечĕн ларăвĕнче Петркувра **Окулицкий** пире «Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен Лондонран приказ илни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл ларура Ян-Станислав **Янковский**, Станислав **Ясюкович**, Антон **Пайдак** тата эпĕ—**Бень** пултăм. **Окулицкий** пире çапла пĕлтерчĕ: «Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен Лондонри «правительство» панă приказ вăрттăн ĕçлекен хĕçпăшаллă вăйсене салатса янине кăтартас шутпа тăвакан политикăллă маневр кăна пулать, терĕ. Тĕрĕссипе эпĕ, **Окулицкий**, çĕнĕ, вăрттăн ĕçлекен çар организацийĕ тума тытăнатăп, терĕ.

1945 çулхи февраль уйăхĕн иккĕмĕш çурринче, вăрттăн ĕçлекен Польша правительствин министрсен совечĕн Милянувск местечкинче пулса иртнĕ ларăвĕнче **Окулицкий** пире «Крайовăй çар» тăрăх кăларнă приказ çинчен пĕлтерчĕ. Вăл ларура мансăр пуçне **Янковский**, Станислав **Ясюкович** тата Антон **Пайдак** пулчĕç. Вăл приказ тăрăх, Польшăра вăрттăн ĕçлекен çар формированийĕ тумалла пулнă. **Окулицкий** пире çапла пĕлтерчĕ: вăрттăн ĕçлекен çар тăвасси питĕ секретлă ĕç пулмалла, терĕ. Унтан вăл вăрттăн ĕçлеме яланхи çарăн офицерĕсене, «Крайовăй çарăн» подразделенийĕсен штабĕсене, хĕçпăшал склачĕсене, радиопередачиксене сыхласа хăварни çинчен каласа пачĕ...»

(ĕç листи—87; 3-мĕш том).

Айăпланакан **А. Ю. Пайдак** çапла каласа панă: «**Окулицкий** мана «**Крайовăй** çара» салатса ярасси çинчен приказ кăларни çинчен тата «Крайовăй **çарăн**» участникĕсен хĕçпăшала, боеприпассене, радиостанцисемпе типографисене тĕплĕн пытарма кирли çинчен пĕлтерчĕ».

(ĕç листисем—160, 107; 5-мĕш том).

Вăрттăн ĕçлекен организацин руководителĕсем: «Стронництво народове» председателĕ тата «Рада едности народовой» вице-президенчĕ **А. К. Звежинский**, çав «радăн» членĕ—демократиллĕ организацисен «Союз демократов» ятлă пĕрлешĕвĕн председателĕ **Е. С. Чарновский**, «Рада едности народовой» секретарĕ **Ф. А. Урбанский**, «Стронництво Людове» партин Центральнăй Комитечĕн членĕсем **С. Ф. Мерзва** тата **К. С. Кобылянский** те çакăн пекех каласа панă.

(ĕç листи 171; 7-мĕш том).
(ĕç листи—70; 9-мĕш том).
(ĕç листисем—78, 80; 10-мĕш том).
(ĕç листи 94; 13-мĕш том).
(ĕç листи—22; 15-мĕш том).

Айăпланакан **Окулицкий** Лондонран штабсене, хĕçпăшала, боеприпассене тата радио таврашне хăварасси çинчен радиограммăсем илнипе поляксен эмиграцири «правительстви» тата «Крайовăй çарăн» руководстви шифрласа янă радиограммăсем те кăтартса параççĕ.

Çавăн пек радиограммăсенчен пĕринче (№ 11869, 1944 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕ) эмиграцири «правительство» 1944 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленин пĕтĕм текстне панă. Вăл постановленире Польшăра пытанса ĕçлессине анлăлатма кирлине кăтартнă тата çак ĕçсене тума хушнă: «Крайовăй çара» тата хĕçпăшала тĕплĕн пытармалла, вăрттăн ĕçлесе ертсе пыркан органсене тата çыхăну ĕçне организацилемелле, çынсене упраса хăвармалла. Юлашкинчен радиограммăра çапла каланă:

«Çак постановление кама та пулин пĕлтернĕшĕн пысăк наказани параççĕ.

Çак постановление чăнахах та «Варта» правительстви йышăннă».

Айăпланакан **Окулицкий** каласа панă тăрăх, «**Варта**» сăмах Лондонри Польша çарĕсен генеральнăй штабĕн шифрла ячĕ пулать.

(ĕç листи—132; 1-мĕш том).

II. «НЕПОДЛЕГЛОСТЬ» («НЕ») ЯТЛĂ ÇАРПА ПОЛИТИКĂЛЛĂ ОРГАНИЗАЦИ ТУНИ

Лондонри эмиграцири «правительство» хушнине пурнăçа кĕртсе, айăпланакан **Окулицкий** Хĕрлĕ Çар командованипе «Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен приказ кăларнипе улталама хăтланнă. Чăннипе илсен, вăл çав çарăн тĕп кадрĕсене упраса хăварнă, çавăн пекех радиостанцисене, хĕçпăшала тата боеприпассене пытарса хăварнă.

Вăрттăн ĕçлекен çав организацие **Окулицкий** «Неподлеглость» («никама пăхăнманлăх») «НЕ» тесе ят панă. «НЕ» текен çак организацин пуçĕнче **Окулицкий** тăнă (ăна: «Недзвяток», «Термит» тесе чĕннĕ).

Милянувск местечкинче (Варшава çывăхĕнче) 1945 çулхи февраль уйăхĕнче вăрттăн ĕçлекен «министрсен» совечĕн ларăвĕнче **Окулицкий** çав организацие ертсе пыма «Стронництво людове», «Стронництво народове», «ППС» (поляксен социалистла партийĕ) тата «Демократсен союзĕн» представителĕсенчен «политикăллă центр» тума сĕннĕ.

«Министрсен совечĕ» çав сĕнĕве ырланă та айăпланакан **Янковские** асăннă партисен представителĕсемпе организацин политикăллă центрне туса хурасси çинчен калаçма хушнă.

Хĕрлĕ Çара хирĕç вăрттăн кĕрешекен хĕçпăшаллă отрядсем тăвас пирки **Окулицкий** çапла каласа панă: 1944 çулхи март уйăхĕнче **Сосновский** уппала тĕл пулнă вăхăтра Хĕрлĕ Çар Польша территорине пырса кĕнĕ хыççăн «Крайовăй çара» вăрттăн ĕçлеме хăварма кирли çинчен каланă. Çак тĕлĕшпе **Сосновский** малтанах «Крайовăй çарăн» округсенчи запаслă штабĕсене тума сĕннĕ, вĕсем вара Хĕрлĕ Çара хирĕç пыракан кĕрешĕве ертсе пымалла пулнă.

Айăпланакан **Окулицкий** çапла каласа панă: 1944 çулхи июль уйăхĕнче **«БУР»-Комаровский** мана **Сосновский** кăтартса панă пек «НЕ» (вăл «никама пăхăнманлăх» тăнине пĕлтерет) ятлă çарпа политикăллă организацие ертсе пыраканĕ пулма хушрĕ, тенĕ.

(ĕç листисем—145—147; 1-мĕш том).

Следстви кăтартса панă тăрăх, «НЕ» ятлă вăрттăн ĕçлекен организацин çакăн пек задачăсем пулнă:

1) организацин кадрĕсене пĕтĕçтерессе, вăрттăн ĕçлеме, СССР-а хирĕç восстани хатĕрлеме хĕçпăшал упраса хăварасси;
2) хĕçпăшаллă отрядсем тăвасси, çавăн пек кашни отрядра 60 çынтан ытла пулмалла пулман;
3) пĕтерекен группăсем текен террорла организацисем тăвасси тата «Крайовăй çар» организацине хирĕç пыракансене тата совет çар командованийĕн представителĕсене вĕлерессе;
4) восстани вăхăчĕ çывхарса килекен тапхăрта диверсиллĕ актсем тума диверсантсем хатĕрлесси;
5) Хĕрлĕ Çар тылĕнче разведка тата контрразведка тăвасси;
6) радиостанцисене упраса хăварса, «Крайовăй çарăн» главнăй командованийĕпе Лондон урлă çыхăну тытасси;
7) СССР-а хирĕç пичет урлă тата сăмах вĕççĕн пропаганда туса пырасси.

(ĕç листисем—15—16; 20-мĕш том).

Организациленĕ хыççăн пирвайхи тапхăрта «Неподлеглость» вăрçăпа политикăллă организаци пулмалла пулнă, пулсан, каярахпа вăл çар организаци çеç пулса тăмалла пулнă: Кун çинчен «Крайовăй çарăн» главнокомандованийĕ ятарласа приказ кăлармалла пулнă.

Айăпланакан **Окулицкипе** Львов обшарĕн коменданчĕ пулнă **Янсона** куçа-куçăн тăратсан, **Янсон** çапла каласа панă:

«Варшавăра мана Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсене хирĕç, çавăн пекех совет влаçĕсен представителĕсене хирĕç тăвакан террорла ĕçсене питĕ вăрттăн тума, айăпне Украина националисчĕсем çине йăвантарма хушрĕç».

(ĕç листи—212; 1-мĕш том).

Айăпланакан **Окулицкирен**: эсĕ çав кăтартусем çинчен пĕлнĕ-и? тесе ыйтсан, вăл: çав кăтартусене эпĕ пĕлнĕ, тесе ответленĕ.

(ĕç листисем—212, 213; 1-мĕш том).

Вăрттăн ĕçлекен «НЕ» организацие хăй тăнă пирки айăпланакан **Янковский** çапла каласа панă:

«**Окулицкий** мана, вăрттăн ĕçлекен министрсен совечĕн председателĕ пулнă тăраканскере, ертсе пыракан центр та-

(Малалли 2-мĕш страницăра).

Польшăра, Литвара тата Белоруссипе Украинăн хĕвеланăç районĕсенче Хĕрлĕ Çар тылĕнче поляксен вăрттăн ĕçленĕ организацийĕн организаторĕсемпе руководителĕсене тата участникĕсене суд туни

Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

виччен организацине политика тĕлĕшпе ертсе пыма сĕнчĕ...

Çак ыйтăва иккĕмĕш хут эпĕ Краковран таврăнсан, 1945 çулхи февраль уйăхĕн иккĕмĕш çурринче, министрсен советĕн ларăвĕнче сÿтсе-яврăмăр.

Эпĕ ертсе пыракан правительствăна пĕтерсе хума пултарассине шута илсе, мана вăрттăн ĕçлекен политикăллă партисен представителĕсемпе тĕл пулса, вĕсемпе çав организацин политикăллă центрне представительсем ярасси çинчен сÿтсе-явма хушрĕç...»

(ĕç листисем—42, 43, 44, 45: 2-мĕш том)

Айăпланакан **Ясюкович** çапла каласа панă:

«**Окулицкий** «Крайовăй çара» урăхлатса çĕнетрĕ те, унпа усă курса, вăрттăн ĕçлекен çĕнĕ çар организацийĕ тума пуçларĕ. Çав организацие поляксен Лондонри правительствин вăрттăн ĕçлекен центрĕ туса хурас тесе, ăна политикăллă функцисем пама шутларĕ...

Савăн пирки те **Окулицкий** ун çумĕнче вăрттăн ĕçлекен политикăллă «партисен» представителĕсенчен ертсе пыракан политикăллă центр тума сĕнчĕ».

Малалла тата:

«Крайовăй çара» салатса ярасси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтерниĕ хыççăн, тĕрĕссипе эпир ăна çаплипех сыхласа хăвартăмăр, çав фактă Совет Союзĕнчен пытарса усрарăмăр.

Вăл çар, Совет Союзне хирĕç кĕрешме тупăскер, чăнахах та Хĕрлĕ Çар тылĕнче диверсипе террорла ĕçсем туса пычĕ. Вăрçă пыракан зонăра совет çар командованийĕн ĕçĕсене пурнăçа кĕртмесĕр тăчĕ. Пирĕн пичет тата радиостанцисем элекле пропаганда туса пычĕç. Польша халăхне вырăссене хирĕç тăратассишĕн пулчĕç».

(ĕç листисем—34, 40, 85: 4-мĕш том)

Айăпланакан **Бень** çапла каласа панă:

«**Окулицкий** тăвакан вăрттăн ĕçлекен çĕнĕ çар организацийĕн Хĕрлĕ Çар тылĕнче сăтăрла ĕçсем тумалла пулнă...»

«**Окулицкий** вăрттăн ĕçлекен хĕçпăшаллă вăйсене пĕтĕçтернĕ, çав вăйсен кирлĕ вăхăтра, **Рачкевич, Арцышевский** кăтартса панипе, Польшăра Хĕрлĕ Çара хирĕç хĕçпăшаллă выступлени пуçласа ямалла пулнă...»

(ĕç листисем—88, 89; 3-мĕш том).

Пайдак, Чарновский, Звежинский айăпланакансем те çÿлте кăтартнă пекех каласа панă.

(ĕç листисем—107, 108; 5-мĕш том)

(ĕç листисем—71—75; 9-мĕш том)

(ĕç листи—173; 7-мĕш том).

III.

«КРАЙОВĂЙ ÇАРПА» «НЕ» ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕН ВĂРТТĂН ĔÇЛЕНĔ ХĔÇПĂШАЛЛА ОТРЯЧĔСЕН ДИВЕРСИПЕ ТЕРРОРЛА ТАТА ШПИОНЛА ĔÇĔСЕМ

Следстви çакна кăтартса панă: Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсен территорийĕсенче, Литвапа Польшăра, Хĕрлĕ Çар тылĕнче 1944 çулта тата 1945 çулăн пуçламăшĕнче «Крайовăй çарăн» вăрттăн ĕçленĕ хĕçпăшаллă отрячĕсем Хĕрлĕ Çарăн уйрăм боецĕсемпе офицерĕсене вĕлернĕ, Хĕрлĕ Çарăн çулйĕрĕсем çинче сăтăрла ĕçсем тунă тата советсен çарпа гражданла учрежденийĕсене хĕçпăшаллă отрядсем пыра-пыра тапăннă.

Çакăнпа пĕрлех «Крайовăй çарăн» участникĕсем Хĕрлĕ Çар çинчен разведкăлла сведенисем пухнă.

«Крайовăй çарăн» диверсиллĕ групписемпе отрячĕсем Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче кăна мар, (поляксен вăрттăн ĕçлекен ушкăнĕсем вĕсене Совет Союзĕ Польшăран «тытса илнĕ» тесе шутланă), Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче те пĕтĕм Польша территорийĕнче ĕçленĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, «Крайовăй çарăн» отрячĕсем террорла ĕçсем тунипе пула, 1944 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшне çитиччен Хĕрлĕ Çарăн 277 боецĕпе офицерне вĕлернĕ, 94 çынна амантнă. Вăл шутран 77 офицера, 87 сержанта, 207 боеца вĕлернĕ е амантнă. 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа майăн 30-мĕшне çитиччен Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене 317 çынна вĕлернĕ, 125 çынна амантнă.

(Списоксене пăхăр, ĕç листисем—1—84; 25-мĕш том).

Аяларахра «АК» отрячĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче тунă сăтăрла ĕçĕсем çинчен тĕплĕнтерех пĕлтеретпĕр.

1. Барановичи тата Гродно облаçĕсенче юлашки вăхăтченех «АК»-ăн диверсиллĕ «Рагнер», «Крысь», «Сибиряк», «Герман» тата ытти отрядсем те сăтăрла ĕçсем туса пуранна.

«Рагнер» отрядĕнче 300 çынна яхăн пулнă. Вăл Хĕрлĕ Çар тылĕнче диверсипе террорла ĕçсем нумай тунă, вырăнти халăха саратнă, вут тивертнĕ, взрывсем тата ытти ĕçсем те тунă:

а) 1944 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче, Белорусси ССР-ĕнчи Гродно облаçĕн Лида районĕнчи Ополинск ял Советне кĕрекен Ворнишки ялĕнче çав отрядăн пĕр пайĕ, Ваплав Степанович **Павловский** («Завея» ятлăскер) ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар чаçне хирĕç тÿрремĕнех çапăçăва тухнă.

1945 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче арестленĕ **В. Е. Павловский** каласа панă тăрăх, «Крайовăй çарăн» участникĕ пулса, вăл «АК» заданийĕ тăрăх Хĕрлĕ Çар чаçĕсене хирĕç пулнă çапăçусене ертсе пынă. Çавăн пирки те ĕнтĕ «АК» ăна наградă панă тата унăн чинне ÿстернĕ.

Çакна «Рагнерăн» «Юг» отрячĕ тăрăх 1944 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче 50-мĕш № приказра çирĕплетсе хăварнă. Вăл приказра çапла каланă:

«Завея» старши сержанта, вăрттăн ĕçлекен 311-мĕш отряд командирне тата 311-мĕш отрядри салтакĕсене совет облавине аркатса тăкнă чухне пуçарулăх кăтартнăшăн тав тăватăп. Çакăнпа пĕрлех «Завея» старши сержанта «Кшижем Валечных» наградине пама тăратни çинчен тата унăн чинне ÿстерме тăратни çинчен пĕлтеретĕп».

(ĕç листисем—141, 142, 143).

б) 1944 çулхи октябрь, ноябрь, декабрь уйăхĕсенче Любары ялĕнче «Рагнер» отрячĕ **А. Круглякс** красноармееца вĕлернĕ, шоссе çулĕпе иртсе пыракан Хĕрлĕ Çарăн икĕ çар çыннине персе вĕлернĕ. Лида районĕнчи Дитрики ялĕнче пĕр совет гражданинне çакса вĕлернĕ, Клюковичи ялĕнче тепĕр çынна персе пăрахнă.

в) 1944 çулхи октябрь уйăхĕнче «Рагнер» отрячĕ Марулины ялĕ çыннине Свирида саратса кайнă, сентябрь уйăхĕнче Котлово ялĕ çыннисене—Урбановичпа **Костюшкина** персе пăрахнă.

г) Белосток чугун çулĕ çинчи Бастуни станцийĕнче отряд водокачкăна вут хыптарса сирпĕнтерсе янă, кунсăр пуçне ытти ирсĕр ĕçсем те нумай тунă.

Çакна отряд участникĕсем—**Урбанович, Неверовский, Шумский** тата тĕрлĕ документсем çирĕплетсе параççĕ.

(ĕç листисем—37, 38, 42, 43, 94, 95, 170, 171; 21-мĕш том).

2. «АК» отрячĕн командирĕ «Сибиряк», вăлах **Лубиковский,** Желудовский районри «Дитрики» именийĕнче диверсантсен ятарласа уçнă шкулне тытса тăнă. Вăл шкулта 200 диверсанта яхăн вĕреннĕ, каярахпа вĕсене «Рагнер», «Крысь», «Сибиряк» отрячĕсем тата ытти отрядсем тăрăх валеçнĕ.

(ĕç листисем—13, 17, 39—47; 31-мĕш том).

И. В. Лубиковский пур диверсантсене те Белоруссипе Украинăн хĕвеланăç облаçĕсене Совет Союзĕ çумне пĕрлештернĕ кун чугун çул транспорчĕ çинче диверсиллĕ ĕçсем тума хушнă.

Лубиковский отрядне пĕтерсе ăна хăйне арестленĕ чухне минăсем, сирпĕнтермелли япаласем тата диверсиллĕ актсем тумалли ытти хатĕрсем тупнă 2 склад тытса илнĕ.

(ĕç листисем—59—61; 31-мĕш том).

3. **Лубиковский** панă пек приказа «АК»-ăн Новогрудокри участокĕн «Труд» ятлă коменданчĕ 1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнче панă. Çав приказра вăл хăйне пăхăнса тăракансене сентябрĕн 17-мĕшĕнче пур районсен территорийĕсенче те диверсиллĕ ĕçсем тума хушнă.

Приказра çапла каланă:

«Операцисем пĕтĕмĕшле пулмалла, çар эшелонĕсене, автомашинăсене, чугун çул линийĕсене сирпĕнтерсе ямалла, кĕперсене çунтармалла, складсемпе ял Совечĕсене пĕтерсе тăкмалла. Çак ĕçсене вăрттăн тумалла».

(ĕç листисем—117, 119—120; 31-мĕш том).

4. Львов, Станислав, Дрогобыч тата Тарнополь облаçĕнче Львов обшарин коменданчĕ поляксен çарĕн подполковникĕ **Янсон** («Кармен» тата «Райграс» ятлăскер) ертсе пынипе хĕçпăшаллă отрядсем хăйсен тискерле ĕçĕсене тунă. 1944—1945-мĕш çулсем хушшинче вĕсем темĕн чухлĕ çынна вĕлернĕ тата диверсиллĕ ĕçсем тунă.

(ĕç листисем—17—20; 20-мĕш том).

Янсона пăхăнса ĕçленисенчен пĕрийĕ, Станислав округĕнчи «АК» отрячĕсен командующийĕ пулнă **В. М. Герман** («Глобус» тата «Кудак» ятлăскер) хăйĕн отрячĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче сăтăрла ĕçсем туни çинчен тĕплĕн каласа панă. Вăл кăтартнă тăрăх, унăн аллинче тивĕçлĕ майпа хĕçпăшалланнă çынсем 3000 таран пулнă. Çав çынсем вăтамран 65-шер çынран тăракан ушкăнсене пайланнă, вăл ушкăнсен кашнин хăйĕн тĕллевĕ пулнă; вăл шутрах Совет Союзĕн çар командованин представителĕсене вĕлерме ятарласа тунă террорла ушкăнсем те пулнă.

Германа арестленĕ чухне ун çумĕнче совет учрежденийĕсенче диверсиллĕ ĕçсем тумалли плансем тата вăрттăн ĕçлекен отрядсен ĕçĕсене организацилемелли приказсем тупса туртса илнĕ.

(ĕç листисем—187—198; 33-мĕш том).

5. Литва ССР-че Хĕрлĕ Çар тылĕнче сăтăрла ĕçсене поляксен эмиграцири правительствин вăрттăн ĕçлекен организацийĕ «Жонду Делегатури» туса пынă.

1944 çул вĕçĕпе 1945 çул пуçламăшĕнче çав организацие пĕтерни чухне Совет Союзĕн çар командованийĕ 30 ытла вăрттăн хваттерсенче «Жонду Делегатурин» хăрушсăрлăх уйрăмĕн тĕрлĕ хучĕсене, картотекине, хĕçпăшалпа боеприпассен склачĕсене, ĕçлекен икĕ радиостанцине, запаслăх 10 рацине, радио япалисен складне тата Совет Союзне хирĕçле çырнă темĕн чухлĕ литература тупса туртса илнĕ.

Çак организацин ĕçĕсене тĕпчесе май çакна палăртнă: «Жонду Делегатурин» тата «Крайовăй çарăн» ĕçĕсене пĕтĕçтерсе йĕркелесе пымашкăн «Комитет Повстанчи» текенскере тунă. Çав комитета «Жонду» делегачĕ **З. Н. Федорович,** «Крайовăй çарăн» коменданчĕ **Я. Я. Кульчицкий** (псевдонимĕ «Вильк») тата «АК» штабĕн работникĕ **Нокопинский** (псевдонимĕ «Юлиан») кĕнĕ.

(ĕç листисем—148—186: 34-мĕш том)

6. Вильнюс ялĕнче сăтăрла ĕçсем туса пуранна «Гром» ятлă диверсиллĕ отряд 1944 çул вĕçĕнче Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе боецĕсене нумай вĕлернĕ, колхозсене саратнă. Çав отрядăн ĕçĕсем çинчен «Гром» отрядăн командирĕн адъютанчĕ пулнă **Я. Т. Павлюн** лайăх кăтартса панă. Ăна хайне «Гром» отряда Хĕрлĕ Çар чаçĕсем аркатнă чухне тыткăна илнĕ пулнă.

(ĕç листисем—167—170, 203—205; 20-мĕш том).

7. **Ч. А. Станкевич** ертсе пынă отряд 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнче Мало-Солешнин ял Совет председательне Василевские, унăн арăмне тата 18 çулти хĕрне, Больше-Солешнин ял Совет председательне Новака, секретарьне Лойка тата 1945 çулхи январь уйăхĕнче Калитанцы ял Совет секретарьне персе пăрахнă.

1945 çулхи январь уйăхĕнче **Станкевич** отрячĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе икĕ хутчен çапăçу пуçласа янă. Çав çапăçусенче Совет воинĕсене 50 çынна ытла вĕлернĕ.

Февраль уйăхĕнче **Станкевич** отрячĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсене 7 çынна тыткăна илнĕ те персе пăрахнă, савăн чухнех отряд Подваран ял Совечĕн икĕ работникне персе пăрахнă.

(Станкевич каласа панинчен, ĕç листисем—245—266; 20-мĕш том).

Польшăра диверсиллĕ тата террорла ĕçсем туса Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене вĕлерни çинчен айăпланакан **Окулицкий** майăн 31-мĕшĕнчи тата июнĕн 4-мĕшĕнчи допроссенче çапла кăтартса пачĕ:

«Хĕрлĕ Çар тылĕнче «Крайовăй çар» сăтăрла ĕçсем тунине кăтартса паракан документсемпе паллашнă хыççăн, «Крайовой çар» участникĕсем тунă диверсиллĕ тата террорла ĕçсемшĕн хама ответлă тесе шутлатăп».

(ĕç листи—151; 1-мĕш том).

«Эпĕ, «Крайовăй çар» командующийĕ, «Крайовой çар» участникĕсем Совет Союзĕн территорийĕнче те, урăхла каласан, Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенче, савăн пекех тата Польша территорийĕнче те террорла ĕçсем туса Хĕрлĕ Çар офицерĕсемпе салтакĕсене вĕлернĕшĕн хама пĕтĕмпех ответлă тесе йышăнатăп...»

«Хĕрлĕ Çара хирĕç шпионла сведенисем пухни тĕлĕшпе те эпĕ савăн пекех хама айăплă тесе каламалла пултаратăп».

(ĕç листисем—192, 193; 1-мĕш том)

Айăпланакансем **Янковский, Ясюкович** тата **Бень** те çавăн пекех кăтартса панă.

Янковский çапла каласа панă:

«Çаксене «Бур»-Комаровский приказĕсем тăрăх, каярахпа Окулицкий приказĕсем тăрăх туса пынă, мĕншĕн тесен вĕсем правительствăран уйрăм ĕçлесе пынă, анчах та эпĕ унăн руководителĕ пулнă май, «Крайовăй çарăн» ĕçĕсемшĕн, каярахпа тата «Неподлеглость» ĕçĕсемшĕн те ответ тытатăп...»

(ĕç листи—152; 2-мĕш том)

Бень çапла каласа панă:

«Эпĕ, поляксен вăрттăн ĕçлекен правительствин министрĕ, «Крайовăй çарăн» ĕçĕсемшĕн, вăл шутрах Польша территорийĕнче вăл Хĕрлĕ Çара хирĕç террорла тата диверсилле ĕçсем тунăшăн та ответ тытатăп».

(ĕç листи—181; 3-мĕш том).

Айăпланакан **Ясюкович** çапла каласа панă:

«Крайовăй çар» Хĕрлĕ Çара хирĕç тунă террорла тата диверсилле ĕçсемшĕн, мана следстви кăтартса панăскерсемшĕн, эпĕ те ответ тытатăп».

(ĕç листи—108; 4-мĕш том).

«Крайовăй çар» Хĕрлĕ Çар тылĕнче тунă диверсиллĕ тата террорла ĕçсемшĕн çавăн пекех тата **Пайдак, Звежинский** тата **Чарновский** те хăйсем айăплине йышăнчĕç.

(ĕç листи—160; 5-мĕш том).

(ĕç листисем—259, 260; 7-мĕш том).

(ĕç листи—112; 9-мĕш том).

Хĕрлĕ Çара хирĕçле шпионла сведенийĕсене пухнишĕн айăпланакан **Окулицкий** июнĕн 13-мĕшĕнчи допросра хăйне пĕтĕмпех айăплă тесе йышăнчĕ.

Следстви материалĕсем çавăн пекех тата çаксене кăтартса параççĕ: поляксен эмиграцири «правительствин» заданийĕсем тăрăх Хĕрлĕ Çар тылĕнче «Крайовăй çарăн» вырăнти организацийĕсен участникĕсем те шпионла сведенисем пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ.

Çакна поляксен эмиграцири правительстви **Окулицкий** патне тата «АК»-ăн округсенчи коменданчĕсем патне 1944 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче № 7201/1/777 ярса панă директивĕ çирĕплетсе кăтартать.

Аялларахра çав директивăн уйрăм сыпăкĕсене илсе кăтартатпăр:

«...Варшавăри центра пĕтерни хыççăн, разведка уйăх хушшинче мĕн тунин рапорчĕсене тĕплĕн фотоÿкерчĕклесе ярса пама чарăнчĕ.

Советсен хĕвелтухăçĕнчи вăрçă тĕлĕшĕнчи шухăшĕсемпе майĕсене пĕлни Польшăри малашнехи событисене аталантарас ĕçре тата ăна план тăрăх ертсе пырас ĕçре питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Савăнпа та сирĕн çак тĕлĕшри çитменлĕхсене пĕтермелле, разведотдел штабĕ кăтартса панă тăрăх, шпионла сведенисем парса тăма тытăнмалла».

Малалла çар чаçĕсем çинчен, транспортсем, çирĕплетнĕ районсем, аэродромсем, хĕçпăшалсем çинчен, фронтсенчи положенисем çинчен, çар промышленноçĕ çинчен тата ыттисем çинчен те мĕнле сведенисем пухма кирлине тĕплĕн кăтартса панă.

(ĕç листисем—31а—34а; 32-мĕш том).

Çав документ пирки тĕпчесе ыйтнă допросра айăпланакан **Окулицкий** июнĕн 13-мĕшĕнче çапла каларĕ: çав директивăна эпĕ чăнах та поляксен Лондонри «правительствинчен» илтĕм те ăна ĕçе кĕртме тытăнтăм, терĕ.

«АК» участникĕсем Хĕрлĕ Çар тылĕнче шпионла ĕçсем тунине следствире ытти çынсем те кăтартса пачĕç. Сапла: «Жонду Делегатурин» Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă территорипчи задачисем çинчен каланă май, унăн руководителĕсенчен пĕрийĕ — **Федорович** çапла каласа пачĕ:

«...Хĕрлĕ Çар Вильно хулине ирĕке кăларнă хыççăн эпĕ «Делегатурăн» вăрттăн ĕçлекен организацине Варшавăри центр урлă поляксен эмиграцири правительствине Вильно хулипе Вильно округĕнчи лару-тăру çинчен пĕлтерсе тăмашкăн сыхласа хăвартăм».

(ĕç листи—194; 34-мĕш том)

Свечковский каласа панине ăна арестленĕ чухне хăй çумĕнче тупнă Хĕрлĕ Çар çинчен шпионла материалсем те 71 листа çине çырнăскерсем, лайăх ĕнентерсе параççĕ.

(ĕç листисем—4, 5, 10; 32-мĕш том).

1944 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче Волковыск станцийĕнче «Крайовăй çар» участникне Франц Францевич **Шанцилона** тытнă. Ун çумĕнче шпионла сведенисен пакетне тупса туртса илнĕ.

Шанцило 1945 çулхи январĕн 19-мĕшĕнчи допросра çапла каласа пачĕ:

«Организацин Волковыскри руководителĕ Болтрукевич хушнă тăрăх, эпĕ шпионла сведенисен пакечĕсене Белосток хулине леçсе тăтăм. Кунта вара вĕсене паллă парольсемпе усă курса организаци членĕсене патăм».

(ĕç листисем—104, 109—111; 32-мĕш том).

Поляксен вăрттăн ĕçлекен «АК» организацийĕсем шпионла сведенисене панă чухне хăйсен аллинчи радиостанцисемпе те усă курнă.

Аяларах тытса илнĕ шифрланă хăшпĕр радиограммăсене кăтартса паратпăр:

1) «АК»-ăн Жешув округĕ 1944 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнче «АК»-ăн Краков округне ярса панă радиограмма:

«...Пжетечирен, Дукельскран, Псянкирен фронт поляксемпе словаксен тата венгерсен чикки тăрăх пырать. Словаксен чиккинче, Ясвинск районĕнче противник территори тĕлĕшĕнчен пысăках мар ăнăçусем тăвать. Советсем Жешувран кăнтăр еннелле эвакуаци тума хатĕрленеççĕ».

(ĕç листисем—122—124; 19-мĕш том).

2) Краковран главнокомандовани адресĕпе панă № 621/2 радиограмма:

Март уйăхĕн иккĕмĕш çур пайĕнче хĕвеланăç еннелле çарсемпе тата çар пурлăхĕсемпе, артиллерипе, Америка танкĕсемпе, 1/3 пайĕ хĕрарăмсенчен тăракан пехотăпа талăкне вăтамран 20 эшелон иртрĕ. Хĕвелтухăç еннелле вара кăмрăк тиенĕ 13 эшелон тата машинăсем тиенĕ пĕр эшелон иртсе кайрĕ. Çавсене Польшăран илсе тухаççĕ.

Краков хулинче 1895—1925 çулсенче çуралнисене хăварт çара илесси çинчен пичетленĕ распоряженисем çыпăçтарса тухнă.

Краков хулинче, Жимерский генерал хутшăннипе, Хĕвелтухăçĕнчен илсе килнĕ 800 офицера вĕрентсе кăларнă. Вĕренсе тухнисенчен нумайĕшĕ тăвата çултан сахалрах вĕреннĕскерсем пулаççĕ.

(ĕç листисем — 35а, 36а: 32-мĕш том).

(Малалли пулать).

ĂМĂРТУ ПУÇАРАКАННИСЕМ ПАТĔНЧЕ

Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăрту пуçарса яракан пулчĕ. Çак ăмăртăва пуçарса ярса, коллектив татăклă обязательствăсем илчĕ. Кунта эпир коллектив хăйĕн обязательствисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен каласа кăтартасшăн.

Юбилея хатĕрленнĕ май комбинатри рабочисем, инженерсемпе техниксем социализмлă ăмăртăвăн паха тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Никитенко, Дмитриев, Новохатный, Павлов, Бабенкова юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсем производство планне уйăхран уйăха ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Паллă слесарь Сергунин ĕç нормине яланах 400—500 процент тултарать. Слесарь Бондаренко юлташ та нормăран 4 хут тухăçлăрах ĕçлет. Вăл 9 уйăх хушши ĕнтĕ комбинатăн чи лайăх слесарĕн ятне тытса тăрать.

Данилов юлташ ертсе пыракан пĕррремĕшпе иккĕмĕш отделенисенчи нумай рабочисем заданисене 180—250 процент тултараççĕ. Фрезеровщик Л. Алексеев — 250 процент, станочница О. Алексеева 183 процент тултарать. П. Грачев юлташ ертсе пыракан виççĕмĕшпе тăваттăмĕш отделенисенчи рабочисем те нормăран 2 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Ăмăртура комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем уйрăмах малта пыраççĕ. Акă Огурцов, Андров юлташсен бригадисем заданисене 200—300 процент тултараççĕ. Канцелярова Спеков комсомолецсем кулленхи нормăна 3 хут ытла тултарса пыраççĕ.

Илнĕ обязателствăсене уйрăмăн çакăн пек пурнăçласа пынă:

Комбинатра ĕçлекенсем республика 25 çул тултарнă ятпа самолет туянма, ăна «Чăваш республики 25 çул тултарни» тесе ят пама пулнăччĕ. Çакăн хыççăнах укçа пухма тытăнса, апрель уйăхĕнче самолет илме укçа банка хывнă.

Комбинат коллективĕ илнĕ обязательствăн 2-мĕшпе 3-мĕш пункчĕсене те ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Çурçулти производство программине июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне, çак уйăхри плана — 24-мĕш числиччен тултарасса шанма пулать. 5-мĕш пункта та пурнăçа кĕртнĕ: продукци хăйне ларакан хакне 1,5 процент чухлĕ чакарнă, ĕç тухăçлăхне 5.6 процент чухлĕ ÿстернĕ.

Улттăмĕш пункт тăрăх, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса кăлармалли пĕрремĕш çурçул планне 88 процент тултарнă. Вĕсене планпа тумаллисене пурне те туса çитернĕ. Анчах пĕр йышши запаслă пайсем хатĕр мар-ха.

Каймалли кунсенче ĕçлесе, çар çыннисен семьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшма 25 пин тенкĕлĕх фонд тунă. Вăл фондран вĕсене 16 пин тенкĕ укçа парса пулăшнă та ĕнтĕ.

Рабочи поселока юсаса илемлетес ĕç те хĕрÿллĕн пырать. Планпа тума палăртнă ĕçсене пурнăçласа çитернĕ. Çапла, пахчи куна çĕнĕрен 150 метр тăршшĕ карта тытнă, 440 метр тăршшĕ картана тĕпрен юсаса тухнă. Пурăнмалли çуртсен умĕсемпе урамсене акаци, тополь, çăка йывăççем 1700 тĕп лартнă. Тротуарсене 900 метр тăршшĕ тĕпрен юсаса çитереççĕ. Çул çине 360 кубометр шлак турттарса тухса, унпа 200 метр тăршшĕ çула сарса лайăхлатнă.

Комбинатăн подсобнăй хуçалăхĕнче çураки ĕçĕсем пĕлтĕрхинчен лайăхрах пыраççĕ. Пĕлтĕр 80 гектар акнă пулсан, кăçал 100 гектар акса хăвараççĕ. Çавăн пекех харпăрхăй пахчисене те 10 процент таран ÿстернĕ. ОРС хăйне валли тата рабочисемпе служащисем валли парниксенче ир пулакан купăста 20 пин тĕп, кайран пулакан купăста 130 пин тĕп, помидор 80 пин тĕп лартса ÿстернĕ.

Комбинат коллективĕ республика юбилейне хăйĕн обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçланипе, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тупипе кĕтсе илет.

Е. ВОЛКОВ

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ИЮНĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ СĔРТМЕ ТĂВАС ТАТА ÇУМ ÇУМЛАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Сĕртме тунă	Çум çумланă
Сĕнтĕр	72.8	4.5
Сĕнтĕрвăрри	58.3	—
Çĕрпÿ	53.7	0.5
Вăрнар	53.4	3.5
Красноармейски	52.3	1.2
Шăхасан	50.1	2.4
Шупашкар	48.1	10.8
Октябрьски	43.1	—
Куславкка	40.7	4.0
Советски	39.2	5.4
Ишлей	37.1	30.3
Муркаш	34.4	—
Калинино	33.5	6.4
Елчĕк	30.1	25.6
Канаш	29.1	26.0
Чурачăк	27.8	2.3
Хĕрлĕ Чутай	26.4	17.3
Етĕрне	24.8	12.2
Элĕк	21.6	0.6
Йĕпреç	21.4	0.8
Чкаловски	20.7	22.6
Комсомольски	18.1	23.9
Пăрачкав	15.3	—
Улатăр	15.1	—
Вăрмар	14.8	—
Шăмăршă	13.4	62.4
Çĕмĕрле	12.8	0.9
Тăвай	8.7	1.1
Кувакино	7.5	19.6
Первомайски	5.8	0.1

Асăрхаттарни: Элĕк, Муркаш, Вăрмар, Шăмăршă тата Етĕрне районĕсем тăрăх июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйсем.

СĔРТМЕ ТУМА ВАСКАМАÇÇĔ

МУРКАШ. июнĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче сĕртме тăвас ĕç питĕ япăх пырать. Нумай колхозсенче, тĕслĕхрен, „Труд", „Красный Октябрь", „Ударник", „Первое мая" колхозсенче сĕртме тума шухăшламаççĕ те. Кунти хăшпĕр колхозсенче туртăм вăйĕ çителĕксĕр тесе чарăнса тăраççĕ. Анчах çав вăхăтрах хăйсен лашисем куне-кунĕпе ĕçсĕр тăраççĕ. Çапла „Труд" колхозра 37 лашапа темиçе кун хушши ĕнтĕ нимĕнле ĕç те тумаççĕ.

Çавăн пекех уя тислĕк кăларасси те питĕ япăх пырать. Районĕпе те 5 колхоз çеç тислĕк тăкма тытăннă.

Çак сăлтавсене пула ĕнтĕ районри колхозсем паянхи кун тĕлне сĕртме тумалли плана 37 процента яхăн çеç тултарнă.

Сайра колхозсенче çеç, тĕслĕхрен, Кутузов, Суворов, Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсенче сĕртме тăвас ĕç кăшт лайăхрах пырать. Вĕсем хăйсен сĕртме тумалли планне çитес кунсенчех тултараççĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

ХАКЛĂ ПРЕМИСЕМ

ЧУРАЧĂК. «Молодая сила» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем иртнĕ çул эмел тумалли курăксем нумай пухнă. Эмел тумалли курăксене пухассине лайăх организацилленĕшĕн тата çак ĕçе комсомолецсем хăйсем те хастарлăн хутшăннăшăн «Молодая сила» колхозри комсомол организацине 3000 тенкĕ преми панă. Комсомол организацин секретарĕ пулнă Яковлев юлташа ВЛКСМ Центральный Комитечĕн хаклă парнине панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПАТĂРЪЕЛĔНЧИ, КАЛИНИНĂРИ, КАНАШРИ, ПĂРАЧКАВРИ, ÇĔРПӰРИ ТАТА ЕТĔРНЕРИ ПЕДАГОГИКА УЧИЛИЩИСЕМ 1-МĔШ КУРССЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕÇÇĔ

Педагогика училищисем пуçламăш шкулсем валли учительсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ, Канашри педагогика училищи кунсăр пуçне тата дошкольнăй учреждениисем валли воспитательсем вĕрентсе хатĕрлет.

Педагогика училищисене 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Техникума вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе экзамен памалла: вырăс чĕлхипе (сăмахпа каласа тата çырса), тăван чĕлхепе (сăмахпа каласа тата çырса), арифметикăпа (сăмахпа каласа тата çырса). 7-мĕш класран отличнăй вĕренсе тухнисене çав класран вĕренсе тухнă хыççăнхи икĕ çул хушшинче педагогика училищисене экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 11-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисене педагогика училищин директорĕ ячĕпе ямалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) автобиографи, 4) виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ, 5) Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), 6) сывлăх çинчен калакан справка.

Педагогика училищине илмелли экзаменсем сентябрĕн 15-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Вĕренме илнисене столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Хваттер суккисене общежитне вырнаçтараççĕ.

ЧАССР Наркомпросĕ.

ЧĂВАШСЕН ЯЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ АГРОНОМИ ФАКУЛЬТЕЧĔПЕ ЗООТЕХНИКА ФАКУЛЬТЕЧĔН 1-МĔШ КУРСНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа (сăмахпа каласа тата çырса) экзамен ăнăçлă панисене илеççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, автобиографи, виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельскохозяйственный Институт, Приемная комиссия.

2—1.

Ют çĕршыв хроники

▲ Польшăри çамрăксен демократиллĕ организацийĕсем сÿтĕç министрĕ патне çыру çырнă. Вăл çырура вĕсем Польша шкулĕсенче вĕрентмелли программăсенчен нимĕç чĕлхине вĕренессине кăларса пăрахма тата çамраксене вырăсла, французла тата акăлчанла вĕрентме ыйтнă.

▲ Иртнĕ кунсенче Нью-Йоркра совет композиторĕн Дзержинскин «Лăпкă Дон» ятлă оперине кăтартнă. Нью-Йоркри хаçатсем çав операна питĕ хавассăн кĕтсе илнĕ Америкăри паллă музыка критикĕсем опера музыкине питĕ ăста çырнă, унăн кĕвви лайăх тесе палăртаççĕ.

(ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00620 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.СС Заказ № 2, ф. 6. 59 42 п. л.